23-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
СЕНТЯБРЬ
13
ВЫРСАРНИКУН
214(6149) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕпе Чăваш АССР Наркомземĕн Политсекторĕ тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çаксене кĕртнĕ:

65. Комсомольски МТС-ĕнчи **хĕрарăмсен трактор бригади** (бригадирĕ **Новиков** юлташ). Бригада сентябрĕн 1-мĕш тĕлне тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне ытлашшипех тултарнă, çемçе суха çине куçарсан планпа 1.590 гектар сухалас вырăнне 1.622 гектар сухаланă.

Ишлей МТС-ĕ тăрăх

66. **9-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **Т. Е. Ефимов** юлташ). Бригада тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне 117,5 процент тултарнă, 3.238 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

67. **14-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **Н. С. Мазяров** юлташ). Бригада тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне 117,5 процент тултарнă, 1.228 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

68. **1-мĕш номерлĕ трактор бригади** (бригадирĕ **Н. И. Елахов** юлташ). Бригада тракторпа ĕçлемелли çулталăк планне 112,1 процент тултарнă, 1.150 килограмм горючи перекетленĕ.

Государствăна тырă парса татасси—фронт умĕнчи тивĕçлĕх

Республикăри малта пыракан куншар колхозсем тăван çĕршыв умĕнчи хăйсен пĕрремĕш тивĕçлĕхне — государствăна обязательствăсем тăрăх тырă парассине пурнăçа кĕртрĕç. Халĕ вĕсем васкасах кĕлте кӳреççĕ, авăнсем çапса пĕтерме тăрăшаççĕ, МТС ĕçленĕшĕн натуроплата тыррине парса татаççĕ, Хĕрлĕ Çар фондне тырă хываççĕ.

Çапла, сăмахран, Çĕмĕрле районĕнчи Тури Кăмашари «Майăн 1-мĕш» колхоз, ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те пĕр вăхăтрах йĕркеллĕн туса пырса, ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухса, унпала туллин усă курса, государствăна обязательство тăрăх тырă парас плана тултарчĕ. Элĕк районĕнчи «Комсомолăн IX Съезчĕ» тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем государствăна ырăш парса татса, Хĕрлĕ Çар фондне пĕри—51 центнер, тепри 60,72 центнер тырă хывнă.

Çакăн пек паха тĕслĕхсене татах та чылай кăтартса пама пулать. Анчах республикăри районсене пĕтĕмĕшпе илсен, государствăна тырă парас ĕç вăраххăн пулса пырать.

Пĕтĕм республикипе государствăна обязательствăсем тăрăх тырă памалли плана сентябрĕн 10-мĕш тĕлне 47,2 процент тултарнă, çак иртнĕ пилĕккунлăхри графика 49,2 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ.

Калас пулать, иртнĕ пилĕккунлăхра çанталăк типĕ тăчĕ. Апла пулин те колхозсем тырă памалли графика пурнăçа кĕртеймен малашне çак ĕçе пысăк хăрушлăх умне тăратать. Йĕпесапаллă çанталăкра, пылчăклă çулпа тырă турттарма нумай йывăртарах тата вăйсем те темиçе хут ытларах кирлĕ пулаççĕ.

Государствăна тырă парас ĕçре Шăмăршă (плана 16,4 процент тултарнă), Первомайски (26,2 процент), Елчĕк (28,8 процент), Чкаловски (31,8 процент), Элĕк (36,3 процент), Кувакино (41,7 процент), Йĕпреç (43,8 процент) районĕсем пуриннчен каярах юлса пыраççĕ.

Çак районсен руководителĕсем тăван çĕршывпа фронт умĕнчи пысăк ответлăха туйса илмен, вĕсем партипе правительствăн кăçалхи тырпула пухса кĕртессипе государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парасси çинчен йышăннă постановленине пурнăçа кĕртме пĕтĕм колхозниксен массине çителĕксĕр мобилизациленĕ, колхозсенчи ĕçе кирлĕ пек организацилемен.

Тырă памалли пилĕккунлăх графикĕ вăл—фронт заказĕ. Тырпул хальхи вăхăтра тăван çĕршывпа фронта боеприпассем пекех кирлĕ. Анчах çакна хăшпĕр районсен руководителĕсем тивĕçлипех ăнланса илмен. Йĕпреç районĕ, сăмахран, пилĕккунлăх графикĕсене тăтăшах тултарса пымасть. Иккĕмĕш пилĕккунлăхра район графика 77,3 процент, виççĕмĕшĕнче 50,3 процент, тăваттăмĕшĕнче 35,4 процент, пиллĕкмĕшĕнче вара пĕтĕмпе те 18,9 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ.

Районри 48 колхозран 8 колхоз кăна государствăна тырă памалли пилĕккунлăх графикне тултарнă. Кунта хăшпĕр колхозсенче государствăна хирĕçле ĕçсем те тĕл пулаççĕ. «Социализм», «XVII-мĕш Партсъезд» колхозсем пĕтĕм тырпулран 20—40 процент авăн çапнă. Анчах малтанхи тырра государствăна парас вырăнне колхоз хушшисем валли салатса янă. Çакăн çинчен ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Артемьев, райсовет исполкомĕн председателĕ Алексеев тата заготовка наркоматĕн районри уполномоченнăйĕ Григорьев юлташсем лайăх пĕлсе тăраççĕ, çапах та тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Колхозниксене аванс шучĕпе тĕрĕс мар тырă панă тĕслĕхсене Куславкка районĕнчи хăшпĕр колхозсенче те тĕл пулма пулать. Сăмахран, Энгельс ячĕпе тăракан колхозра çапнă тырăран колхозниксене аванс шучĕпе 70 процент, «1-ое мая» колхозра — 32 процент, Молотов ячĕпе тăракан колхозра—41 процент валеçсе панă. Партипе правительствăн кăтартăвĕсене çакăн пек пăснине халех чарса лартмалла.

Государствăна тырă парас ĕç единоличниксем енĕпе вара татах та япăхрах пырать. Улатăр, Элĕк, Вăрнар, Калинински, Канаш, Куславкка районĕсенчи единоличник хуçалăхĕсем государствăна тырă пачах та паман.

МТС-сем ĕçлесе панăшăн натуроплата тӳлес тата Хĕрлĕ Çар валли тырă фондне хывас ĕçсем уйрăмах кая юлсе пыраççĕ. Натуроплата тӳлемелли плана сентябрĕн 10-мĕш тĕлне республикипе пĕтĕмпе те 10,0 процент кăна, Хĕрлĕ Çар фондне хывмалли плана 13,2 процент кăна тултарнă. Ку енĕпе уйрăмах Шăмăршă, Кувакино, Пăрачкав, Улатăр, Первомайски, Çĕрпӳ, Чкаловски, Комсомольски, Сĕнтĕр районĕсем кая юлнă. Кувакино районĕ Хĕрлĕ Çар фондне тырă пĕр пĕрчĕ те хывман.

Государство умĕнчи чи ответлă обязательствăна татас ĕç çавăн пек вăраха тăсăлса пыни чи малтан районсемпе колхозсен руководителĕсем çак ĕçе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек организацилеменнинчен, авăн çапас хăвăртлăха куллен ӳстерсе пыманнинчен, хатĕрлев пункчĕсене тырă турттарма ятарласа бригадăсем уйăрманнинчен килет.

Фронтри оборона рубежĕсене çирĕп тытса тăрас тесен, нимĕçсен фашистла çарне татах та ытларах аркатас тесен, фронта — боеприпассем, паттăр воинсене — апат-çимĕç вăхăтра та çителĕклĕ таран парса тăмалла. Фронт ыйтнипе хирĕçлентен государствăна тырпул памалли обязательствăсене васкаса тултарма ыйтать.

НОРВЕГИН СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ ПОСОЛĔ Г. Р. АНДВОРД ВЕРИТЕЛЬНĂЙ ГРАМОТĂСЕМ ПАНИ

Сентябрĕн 9-мĕшĕнче СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Норвегин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне Р. Андворд господина йышăннă. Р. Андворд господин хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамоти

ВЛКСМ Центральный Комитечĕн Хисеплĕ грамотине тунă. Çак грамотăна комсомолăн обкомĕсем, крайкомĕсем тата союзлă республикăсен Центральный Комитечĕсем тăратнă тăрăх, ЦК ВЛКСМ комсомолецсене тата комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене парать.

Хисеплĕ грамотăпа промышленноçри, транспортри тата ялхуçалăхĕнчи стахановецсене, комсомолецсемпе çамрăксен фронтри пек ĕçлекен бригадисен бригадирĕсене, ĕç тухăçлăхне пуринчен ытларах ӳстернĕ участокри руководительсемпе мастерсене, рационализаторсемпе изобретательсене, комсомолецсемпе çамрăксен контрольнăй посчĕсен руководителĕсене, шкулта аслă классенче отлично вĕренекенсене наградăлаççĕ. Çак хисеплĕ грамотăпа çамрăксене лайăх ертсе пынипе палăрнă комсомолăн пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсемпе комсоргсене, фронтăн боевой заданисене пурнăçа кĕртме çамрăксене организацилеме пултарнă комсомолăн пуçламĕш организацийĕсене, всевобуч боецĕсене, командирĕсене тата политработникĕсене çар ĕçне, политикăна вĕренессипе лайăх показательсем кăтартсан—наградăлаççĕ.

Çĕршывпа фронта тырпул боеприпассем пекех кирлĕ

Колхозниксемпе колхозницăсем, государствăна тырпул памалли обязательствăсене вăхăтра тултарар!

Çапнă тырра тĕплĕн шута илеççĕ

ЙĔПРЕÇ, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). «Заря» колхозра капана хывас тата авăн çапас ĕçсене пĕр чарăнмасăр туса пыраççĕ. Паянхи куна 151 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă, вăл çак ĕçе 72,9 процент тултарни пулать. МТС-ран молотилка илсе пырасса кĕтсе тăмасăр, колхоз хăйĕн молотилкине ĕçе янă. Вырнă тырра çуррине яхăн çапнă ĕнтĕ.

Кунта молотилкăпа çапнă тырра тĕплĕн шута илсе пыраççĕ. Çапнă тырра малтан весовщик йышăнать, вăл çав тырра амбара ăсатнă чухне кашни лав çине миçе михĕ, миçе центнер кунине кăтартса уйрăм документ çырать. Завхоз вара тырра çав документсем тăрăх йышăнать, анчах та вăл тырра тепĕр хут виçет, вара ăна амбара хываççĕ. Çапнă тырра кунта итемсенче тепĕр куна хăвармаççĕ, çав кунах амбара хываççĕ.

«Победа» колхозра тырра МТС молотилкипе çапаççĕ, унпала талăкра 12 тонна вырăнне 14—15 тонна çапаççĕ. Çапнă тырра тĕплĕ шутласа илме МТС-ран пĕр весовщик, колхозран тепĕр весовщик тăратнă. МТС весовщикĕ виçет те колхозăн весовщикне парать. Колхозăн весовщикĕ тырра сортласа татсатма витнĕ итеме ярать. Сортланă хыççăн ăна тепĕр хут виçет те амбара ăсатать. Амбара завхоз çав тырра тепĕр хут виçсе йышăнать.

Итем çинче икĕ хурал тăратнă. Вĕсем улшăнса тăрса талăкĕпех хурал тăраççĕ.

Анчах хăшпĕр колхозсенче ĕçе çавăн пек организацилемен. Сăмахран, «Большевик» колхозра комбайнпа çапнă тырра МТС весовщикĕ виçсе сортлама янă хыççăн ăна тепĕр хут виçмесĕрех амбара ăсатаççĕ. Амбарта завхоз ăна вара пĕчченех виçсе йышăнать. Вăл тырă виçине мĕнле кăтартас тенĕ, çавăн пек кăтартма пултарать. Унсăр пуçне тата тырă турттаракансем те тыррăн пĕр пайне айккинелле ăсатма пултараççĕ.

Комбайн унта питĕ начар ĕçлет. Марковкин машинистăн айăпĕпе вăл час-часах çĕмĕрĕлсе ахаль ларать.

Ĕçе организацилес тĕлĕшпе çакăн пек колхозсен малта пыракан колхозсен опычĕпе усă курмалла.

Д. МИХАЙЛОВ.

ГОСУДАРСТВĂНА ЙĔТĔН ВĂХĂТРА ПАРАÇÇĔ

ÇĔМĔРЛЕ, сентябрĕн 12-мĕш. («Чăваш Коммуни» корр., телефонпа). Кăçал районри колхозсен уйхирĕсенче техникăллă культурăсем питĕ лайăх пулчĕç. Планпа колхозсен 494 гектар çинчен йĕтĕн пуçтарса кĕртмелле. Паянхи кун тĕлне 487 гектар çинчи йĕтĕне татса пуçтарнă.

«Комбайн», «Будь готов», «Большевик», «Подборное», «Искра», Ленин ячĕпе тăракан колхозсем йĕтĕне тахçанах татса пĕтерсе, çапнă, сӳс тума сарса хунă.

Районри чи пысăк «Красноармеец» колхоз кăçал 85 гектар çинчи йĕтĕне кĕске срокра пуçтарса кĕртрĕ, районри колхозсенчен чи малтан государствăна 35 центнер йĕтĕн вăрри пачĕ. Турханти «Комбинат» колхоз та государствăна 15,82 центнер йĕтĕн вăрри парса, плана 66 процент пурнăçларĕ.

Пăрça йышши культурăсене те пуçтарса кĕртрĕç

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри колхозсем сентябрĕн 10-мĕшĕнче пурте çурхи тырăсене вырса пĕтерчĕç. Пĕтĕмпе 8.123 гектар вырнă. Вăл шутран 7.787 гектар çинчи тырра капана хывнă, 4.157 гектар тыррине çапнă.

«Подборное», «1-ое мая», «Путь Ленина», «Красный Акмал», «Искра», «Труд», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем пучахлă тырăсемпе пĕрлех пăрça йышши культурăсене те пуçтарса кĕртрĕç.

Хĕрлĕ Çар фондне тырă хываççĕ

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Сыпайкасси ялсоветĕнчи «Труд» колхозра ялхуçалăх ĕçĕсем ăнăçлăн пулса пыраççĕ. Колхоз çак кунсенче Хĕрлĕ Çар фондне 33 центнер тырă хыврĕ. Çавăн пекех «Коммунизм» колхоз 28 центнер, «Агроном» колхоз 20 центнер, Крупская ячĕпе тăракан колхоз 30 центнер хыврĕç.

Районри Жданов, Свердлов ячĕсемпе тăракан колхозсем государствăна тырă парас обязательствăсене 100 процентчĕпех пурнăçларĕç.

П. ЛУКИН.

Тăкаксемпе вирлĕн кĕрешмелле

Сентябрь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, пирĕн республикăри колхозсен уйхирĕсенче тырпул нумай тăкаланса юлнине палăртнă. Тăкаксемпе кĕрешесси çинчен республикăри организацисем темиçе хут кăтартса панă пулин те, нумай районсенче ăна пурнăçласа пымаççĕ, тăкаланчăксемпе кĕрешмеççĕ. Çăмăллăн тумалли ĕçсенех, калăпăр, пучах пухассине те чылай çĕрте организацилемен. Уйрăмăнах тырпулсене вырнă хыççăн пучахсем нумай тăкаланса юлнă.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красный Волгарь» колхозра сĕлĕ, ырăш, çурхи тулă пулнă вырăнсенче 200 центнера яхăн тырпул тăкăнса юлнă. Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра ырăшпа тулă пулнă вырăнсенче, пĕтĕмпе шутласан, 1.200 пăта яхăн тырă тăкăнса юлнă. Кунашкал тĕслĕхсем татах та илсе кăтартма пулать, анчах та тырă çавтери нумай тăкаланнине çӳлте илсе кăтартнă фактсенчен те курма пулать. Тĕрĕсрех каласан, пучахсене пухас ĕçе хăшпĕр колхозсем ячĕшĕн çеç тăваççĕ, е вуçех те организацилемеççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Красная звезда» колхозра шкул ачисем çурхи тулă вырнă вырăнта 505 килограмм пучах пуçтарнă. Шутласа пăхнă тăрăх, çак колхозра тулă 505 килограмм çеç мар, 1.764 килограмм пуçтарма май пулнă. Çапла ĕнтĕ, уя 1.200 килограмм ытла пучах выртса юлнă. Çак колхозрах ырăш пуссинчи тăкаланчăксене пуçтарнă пулин те, кашни гектар çинче 36,5 килограмм пучах выртса юлнă.

Тырăсене вырса пĕтернĕ уйра мĕн чухлĕ пучах пуçтарма пултарнине шутласа, уя участоксем çине пайламалла та, çав участокран миçе килограмм пучах пуçтармаллине кăтартса парса уйрăм заданисем памалла. Вара тин пучахсене пуçтарас ĕçре паха результатсем тума пулать. Çавăн пек тумасан, уя тăкăнса юлнă пучахсем сая кайма пултараççĕ.

Авăн çапнă чухне улăма лайăх силлемелле. Ун пек тумасан, улăм çине нумай тĕштырă каять. Ленин ячĕпе тăракан колхозра (Елчĕк р.) 1941—1942 çулхи ырăш улăмĕ çинче 1.200 пăт ытла тĕштырă юлнă. «Малалла» колхозра (Сĕнтĕрвăрри р.) алăпа çапнă тырра иккĕмĕш хут çапнă хыççăн, 25 кĕлтерен 175 грамм тырă тухнă, çапла вара пĕр гектар çинчи кĕлтесем çине 175 килограмм тĕштырă юлма пултарать. Уйрăмăнах çурхи тулла начар çапни пулать. Анчах та сăнаса пăхнă тăрăх, çакă тырă кĕрчи тĕррипчен мар, молотилкăсемпе ĕçлеме пĕлменнинчен, кĕлтесене барабан ăшне пĕр пек ярса тăманнинчен килет. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек туни вăл ĕç пахалăхне чакарать. Тырăсене хăвăрт çапса пĕтерес тесен, тырра машинăсемпе ытларах çапмалла.

Нумай çĕрте арпана тырăран начар уйăраççĕ. Çавăн пирки арпа çине нумай тырă каять. «Красная звезда» колхозра (Сĕнтĕрвăрри р.) сложнăй молотилкăпа çапнă арпа çине тырă сахал юлать, «Осоавиахим» (Елчĕк р.), «Правда» (Сĕнтĕрвăрри р.) колхозсенче вара арпа çине нумай тырпул каять. «Осоавиахим» колхозра (Елчĕк р.) арпа çине 6 процент тырă каять. Вăл 58 центнер пулать. Çавăнпа та тырра кĕреçепе ывăтса сăвăрассине чарас, веялкăсемпе кунĕн-çĕрĕн ĕçлессине организацилемелле, молотилкăпа çапнă тырра тасатма ĕлкĕрсе пымалла.

Кĕлтесене кӳнĕ чухне çĕмел ларнă вырăна выртса юлакан пучахсене кĕреплепе тураса пуçтармалла, мĕншĕн тесен çĕмел ларнă вырăнта ялан нумай пучах выртса юлать. Шупашкар районĕнчи «Молния» колхозра кашни çĕмел вырăннех 175-шер пучах выртса юлать. «XI лет Октября» колхозра тырпул мĕн чухлĕ тăкăннине тĕрĕсленĕ чухне пĕр çĕмел вырăнĕнчех 410 пучах пуçтарнă. Пучахсене тураса тата иккĕмĕш хут алăпа пуçтарса илсен, çав тăкаланчăксем уя юлмаççĕ, колхозсен амбарĕсене кĕреççĕ, колхозниксем ĕçкунĕпе илекен тупăша кĕреççĕ. Нумай колхозсенче пучахсене пуçтарма тунă кĕреплесемпе пачах ĕçлемеççĕ е питĕ начар усă кураççĕ.

Юлашкинчен, республикăри колхозсенче кĕлтесене капана хывас ĕç çителĕксĕр пулса пынине те палăртмалла. Колхозсенче тырпула уйран итем çине турттарса капана хывса пĕтернĕ хыççăн тин çапаççĕ. Çакнашкал практикăна пĕтерсе иçе уйри кĕлтесене çавăнтах алăпа йĕтса капана хывас пулать, кайран вара авăн çапас ĕçе те çавăнтах пуçласа ямалла.

Тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра тырра тăкаласа хăварни колхозсене, çавăн пекех республикăна та пысăк сиен кӳрет. Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхозра тăкаланчăксемпе кĕрешменнине пула тырпул 1.065 центнера яхăн тăкаланнă. Тырра çакăн пек тăкаласа хăварни—çĕршыв умĕнче преступлени туни пулать. Тăкаланчăксемпе кĕрешессине темиçе хут вăйлатмалла. Уя пĕр пĕрчĕ те ан юлтăр.

Л. ПЕЛЬЦИХ,
Чăвашсен Ялхуçалăх Институчĕн профессорĕ.

Совхозри рабочисем ăмăртса ĕçлеççĕ

«Росглаввино» тресчĕн Шупашкарти совхозĕнче рабочисемпе служащисем пĕр-пĕринпе социализмла ăмăртса ĕçлеççĕ. Çак кунсенче совхоз дирекцийĕпе политотдел ăмăрту итогĕсене турĕç.

Совхозăн эрех тăвакан цехĕ кăçалхи пĕрремĕш çурçула панă задание 105,3 процент пурнăçланă, июль уйăхĕнчи плана—116.7 процент, август уйăхĕнче — 102,4 процент тултарнă. Утă тума акнă курăксене вăхăтра çулса пухнă. Вика утти кашни гектар çинче план тăрăх 20 центнер туса илмелле пулсан, 30 центнершар пухса кĕртнĕ. Ирхи купăста тăватă гектар çинче 100 тонна тăвас вырăнне, 200 тонна туса илнĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç те начар мар пулса пырать, çамрăк выльăхсене пурне те ӳстереççĕ.

Бригадăсем тата уйрăм рабочисем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Çак ăмăртура çимĕç сĕткенне пухакан цехăн бригадирĕ Каравашкина юлташ июль тата август уйăхĕсенче нормăна 117 процент таран тултарса ĕçленĕ. Вăл çамрăк работницăсене çак ĕсталăха вĕрентет. Август уйăхĕнче работница А. Николаева нормăна 131 процент, М. Крючкова 148,5 процент тултарса ĕçлерĕç. 16 çулхи Егорова çырла пухнă çĕрте кашни кунах нормăна 200 процент таран тултарса пычĕ. Çавăн пекех В. Штубова, С. Штубова, Давыдов, А. Чумакова, Ильдейкин юлташсем те нормăсене ирттерсе тултарса ĕçлерĕç.

Паянхи куна совхоз коллективĕнче стахановла ĕçлекенсем 26, ударниксем 29 çын. Уйрăмах эрех тăвакан цехра стахановецсен йышĕ пысăк.

Совхозри рабочисем халĕ çĕрулми кăлараççĕ, вăрлăхлăх викăна пухаççĕ, ку ĕçсене те пĕр-пĕринпе ăмăртса туса пыраççĕ. Производствăра тăрăшса ĕçлесе, рабочисем Хĕрлĕ Çар валли тата хула халăхне валли ытларах апат-çимĕç туса пама тăрăшаççĕ.

Н. ВИШНЕВ,
«Росглаввино» совхозĕн политотдел начальникĕ.

Графика пурнăçламаççĕ

Хатĕрлев наркоматĕн Сĕнтĕрвăрри районĕнчи уполномоченнăйĕ М. Сидоров юлташ куллен хăйĕн кабинетĕнче ларса шалтах аптраса çитнĕ.

— Уполнаркомзагăн учетчикне манпа килĕшмесĕрех урăх ĕçе ячĕç. Халĕ ĕçĕн йĕрки пăсăлчĕ, государствăна тырă тăратмалли графика та пурнăçласа пырайми пултăмăр, — тет Сидоров юлташ.

Район государствăна тырă памалли 5 кунлăх графиксене нихăçан та пурнăçласа пыман. Малтанхи пилĕккунлăхра государствăна 68 тонна тырă парас вырăнне, пĕтĕмпе те 32,8 тонна çеç панă. Çавăн пекех сентябрĕн пĕрремĕшпе 5-мĕш кунĕсем хушшинче график тăрăх государствăна 130 тонна тырă памалла пулнă пулсан, районри колхозсем çав вăхăт хушшинче 82 тонна анчах панă.

Район кая юлса пыни уполнаркомзаг учетчикне урăх ĕçе куçарнинче мар, пачах урăхла, хатĕрлев ĕçне фронт ыйтнă пек пуçа пыманнинче. Сентябрĕн 5-мĕш тĕлне районра 12 колхоз государствăна нимĕн чухлĕ те тырă паман. Уполнаркомзагăн ялсенчи агенчĕсем государствăна обязательнăй йĕркепе тырă памалли плана хăвăртрах пурнăçлас тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Государствăна тырă парас ĕç единоличниксем хушшинче пушшех те начар пырать. Вĕсем государствăна 5 тонна вырăнне пĕр тонна çеç тырă панă. Сĕнтĕрпуç, Ăстакасси, Ванновка ялсоветĕнчи единоличниксем государствăна тырă пама пуçламан та.

Район кая юлса пыни партипе советăн тата комсомолăн районри активĕ колхозсенче сахал пулнинчен тата колхозсене пачах çителĕксĕр пулăшса пынинчен килнĕ. ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн хатĕрлев организацийĕсене хăйсем енчен çирĕппĕн пулăшса пымалла. Анчах та халĕ çакă çук-ха.

Н. ПЕТРОВА.

СĔНТĔРВĂРРИ. (Хамăр корр.)

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри вырăнти топливо промышленноçĕн, «Чувашлесзаг» тресчĕн, вырăнти промышленноçăн предприятийĕсен тата промысла коопераци артелĕсен 1942 çулти август уйăхĕнчи ĕçĕсене пăхса тухнă.

Промышленноçăн асăннă отраслĕсем тата промысла коопераци, июль уйăхĕнчипе танлаштарсан, август уйăхĕнче пĕтĕмĕшпе продукци туса кăларассине ӳстернĕ. Предприятисемпе артельсем чылайĕшĕ государство планне тата оборонăллă заданисене тултарассипе, çавăн пекех тата куллен кирлĕ таварсене туса кăларассипе лайăх ĕçленĕ.

Совнарком çапла йышăннă:

ВЫРĂНТИ ТОПЛИВО ПРОМЫШЛЕННОÇĔ ТАТА «ЧУВАШЛЕСЗАГ» ТРЕСЧĔ ЕНĔПЕ

Август уйăхĕнчи итогсем тăрăх социализмлă ăмăртура **Çĕмĕрлери «Шутово» торф предприятийĕ** (директорĕ Храмкин юлташ, парторг Богданов юлташ, торфком председателĕ Нестеров юлташ) чи мала тухнă тесе шутлас, çав предприятие **Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ** ялавне тата 20 пин тенкĕ укçан памалла тăвас;

пĕрремĕш вырăна Канашри леспромхоз (директорĕ Лопин юлташ, рабочком председателĕ Андреева юлташ) йышăннă тесе шутлас, ăна пĕрремĕш преми—15 пин тенкĕ укçа памалла тăвас;

иккĕмĕш вырăнсене Шупашкар леспромхозĕ (директорĕ Соколов юлташ, парторг Андреев юлташ, рабочком председателĕ Артори юлташ) тата Елчĕк райлесзагĕ (директорĕ Кузнецов юлташ, профоргĕ Кадышев юлташ) йышăннă тесе шутлас, вĕсене иккĕмĕш премисем—10-шар пин тенкĕ укçа памалла тăвас;

август уйăхĕнче Етĕрне торф предприятийĕ, Çĕрпӳ, Улатăр, Вăрмар, Çĕмĕрле тата Тăвай леспромхозĕсемпе Первомайски райлесзагĕ лайăх ĕçленине палăртас.

ВЫРĂНТИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ЕНĔПЕ

Август уйăхĕнчи итогсем тăрăх социализмлă ăмăртура **Альгешри йывăçран авса япаласем тăвакан «Басон» фабрика** (директорĕ Егоров юлташ, парторг Малькова юлташ, фабком председателĕ Федова юлташ) мала тухнă тесе шутлас, ăна **Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне,** 15 пин тенкĕ укçан памалла тăвас;

пĕрремĕш вырăна Шупашкарти техноткацки фабрика (директорĕ Ерышев юлташ, парторганизацин секретарĕ Бердянская юлташ, фабком председателĕ Рудман юлташ) йышăннă тесе шутлас, ăна пĕрремĕш премი—10 пин тенкĕ укçа памалла тăвас;

иккĕмĕш вырăна Шупашкарти атă-пушмак çĕлекен мастерской (директорĕ Эпштейн, парторг Калякинов, местком председателĕ Гладышева юлташсем) йышăннă тесе шутлас, ăна иккĕмĕш преми—5 пин тенкĕ укçа памалла тăвас;

август уйăхĕнче Чкаловски райпромкомбинат лайăх ĕçленине палăртас.

ПРОМЫСЛА КООПЕРАЦИ ЕНĔПЕ

Август уйăхĕнчи итогсем тăрăх социализмлă ăмăртура Октябрьски районри **Караньялĕнчи «Труд» артель,** Чăвашшвейпромсоюз системине кĕрекенскер (артель правленин председателĕ Мокеев юлташ), мала тухнă тесе шутлас, ăна **Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне,** 15 пин тенкĕ укçан памалла тăвас;

пĕрремĕш вырăна Канашри «Авангард» артель, Чăвашпромсоюз системине кĕрекенскер (артель правленин председателĕ Васильев юлташ), йышăннă тесе шутлас, ăна пĕрремĕш преми—10 пин тенкĕ укçа памалла тăвас;

иккĕмĕш вырăна Сĕнтĕрвăрринчи «Крестьянский кузнец» артель, Чăвашпромсоюз системине кĕрекенскер (артель правленин председателĕ Титов юлташ), Шупашкарти «Красный мебельщик» артель, Чăвашдревпромсоюз системине кĕрекенскер (правлени председателĕ Егоров юлташ), йышăннă тесе шутлас, вĕсене иккĕмĕш премисем — 5-шер пин тенкĕ укçа памалла тăвас;

август уйăхĕнче Ермаковăри ВКП(б) XVIII съезчĕ ячĕпе тăракан, Куславккари «Прогресс», Шупашкарти «Кооператор», Шупашкарти «Пекарь», Елчĕкри Буденный ячĕпе тăракан тата Етĕрнери «Красный яр» артельсем лайăх ĕçленине палăртас.

* * *

ЧАССР Совнаркомĕ вырăнти топливо промышленноçĕн управленине, «Чăвашлесзаг» трестне, Промкооперацин РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйне, Промсоюзсене, предприятисемпе артельсен руководителĕсене вырăнти топливо промышленноçĕнчи, вырăнти промышленноçри тата промысла кооперацинчи работниксене пурне те социализмлă ăмăртăва хутшăнтарма, социализмлă ăмăртăва ертсе пыма, сентябрь уйăхĕнче предприятисемпе артельсем пурте плансене тултармалла тата ирттерсе тултармалла тума хушнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 11-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Сентябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинградран** хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, **Моздок** районĕнче, çавăн пекех тата фронтăн **Волхов** участокĕнчи **Синявино** районĕнче вăйлăн çапăçнă. Темиçе кун хушши хаярран çапăçнă хыççăн пирĕн войскăсем **Новороссийск** хулинчен тухса кайнă.

* * *

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсенне 15 танкпа бронемашина, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинăна çити, боеприпассем тиенĕ 30 лава ытла пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, полевой тата зенитнăй артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 4 складне тата горючи хунă 3 склада сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине икĕ батальона çити тата кавалери эскадронне сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре хĕрӳллĕ çапăçусем пынă. Пирĕн войскăсем противникăн пехотипе танкĕсен авиаци пулăшса пынипе наступлени тăвакан йышлă вăйĕсен атакисене сире-сире янă. Çав çапăçусенче нимĕçсен фашистла войскисем чĕрĕ вăйпа техника тĕлĕшĕнчен питех те пысăк çухатусем тӳсеççĕ. Н-ски чаçăн участокĕнче кăна халăх пурăнакан пункт патĕнче пынă çапăçура пирĕн боецсем нимĕçсен 17 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 400 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра противникăн 30 танкĕ ытла пирĕн артиллери батарейин позицийĕсене атакăланă. Пирĕн боецсем рубежа сыхласа хăварнă; тӳррĕн тĕллесе персе, вĕсем нимĕçсен 14 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисемпе хаяррăн çапăçнă. Н-ски часть противникăн темиçе атакине сирсе янă, унтан, контратака туса, нимĕçсене хăйсен малтанхи позицийĕсем патне хăваласа янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 240 вилли тата нимĕçсен çунса кайнă 3 танкĕ выртса юлнă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем противникăн юханшывăн кăнтăр енне каçнă группировкипе çапăçнă. 5 кун хушшинчи çапăçусенче çав участокра нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă тата противникăн 90 танкне ытла персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем çирĕплетнĕ темиçе пункта тытса илнĕ. Н-ски чаçăн боецĕсем нимĕç пехотин батальонне аркатса тăкнă. Вилнĕ гитлеровецсем хушшинче нимĕçсен 129-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 430-мĕш полкăн командирне тата çав полкри 1-мĕш батальонăн командирне тупнă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем наступлениллĕ çапăçусенче 2 танка персе çĕмĕрнĕ тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 500 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Фронтăн Волхов участокĕнчи Синявино районĕнче пирĕн войскăсем противника атакăланă та халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ. Противник, хăйĕн позицийĕсене каялла тавăрас тесе, контратакăсем тунă. Противникăн пур контратакисене те сирсе янă, ăна пысăк çухатусем тӳстернĕ.

Пирĕн чаçсем пĕр çапăçура кăна нимĕçсен 26 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Венгерецсен 46-мĕш пехотнăй полкĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Ференц Рикович çапла каласа панă: «Пирĕн чаçа вырăссем атакăларĕç те, вăл каялла чакрĕ. Пирĕн 200 салтак ытла тата çĕр хĕçпăшал ытла пĕтрĕ. Каялла чакакан венгерецсене нимĕçсем пулеметпа персе вĕлерме пуçларĕç. Эпир икĕ вут-çулăм хушшинче пулса тăтăмăр та тыткăна парăнма шут тытрăмăр. Венгри çарĕнче апат начар çитерĕççĕ. Кунне 150—200-шер грамм çăкăр параççĕ. Пирĕнпе пĕрле тăракан нимĕç салтакĕсене лайăхрах тăрантараççĕ. Нумаях пулмасть пире нимĕç командованийĕн приказне вуласа пачĕç; çав приказра çапла каланă: «Венгерец салтакĕ ӳпкелешме тивĕçлĕ мар, Ӳпкелешнĕшĕн çакса хураççĕ. Анчах та пурин те çакна пĕлес пулать: çăкăр никам та 150—200 грамран ытла илмест», тенĕ.

* * *

Нимĕçсем оккупациленĕ районсенчен Гаммельбургски лагере илсе кайнă совет боецĕсемпе мирлĕ граждансем мĕнле пурăнни çинчен хыпар илнĕ. Çав лагерьте 4.000 çынна яхăн пурăнать. Вĕсенчен пысăк пайĕ — нимĕçсем оккупациленĕ хуласемпе ялсенчи мирлĕ çынсем. Нимĕçсем вĕсенчен лайăх тумтире, атă-пушмака тытса илнĕ, вĕсем вырăнне вараланчăк çĕтĕк-çатăк тата йывăç пушмак панă. Лагерăн администрацийĕпе хуралĕ совет çыннисене вырьăхха тыткаланинчен те хаяртарах тыткалаççĕ. Унта хупнă çынсене нимĕç помещикĕсен хирĕсенче талăкне 16-шар сехет ĕçлеттереççĕ, плуга кӳлеççĕ, лавсем турттараççĕ. Лагерьте выççăпа тата вăйран кайса ĕçленипе вуншар çын вилет.

Сентябрĕн 12-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳрен

Сентябрĕн 12-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинградран** хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре, **Моздок** районĕнче, çавăн пекех тата фронтăн **Волхов** участокĕнчи **Синявино** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

* * *

Сталинградран хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисен атакисене сире-сире янă. Н-ски чаçăн боецĕсем çапăçса нимĕçсен 6 танкне, пехота ларса пыракан 3 автомашинине тата 180 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра совет танкисчĕсем хаяр çапăçура 8 танк, 7 противотанковăй оруди, 12 пулемет точкине тата çĕр нимĕç автоматчикне çити пĕтерсе тăкнă. Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре артиллери батарейи противникăн пехотине икĕ ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пынă. Пĕр участокра пирĕн артиллеристсем уçă позицисенчен персе нимĕçсен 5 танкне пĕтерсе тăкнă тата танксем хыççăн пыракан пехотăна сапаласа янă. Н-ски чаçăн боецĕсем противник тăракан вырăна çĕрле пырса кĕнĕ те горючи тултарнă 3 автоцистернăна сирпĕнтерсе янă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн войскăсем активлăн çапăçнă. Н-ски часть 4 танк, 11 автомашина пĕтерсе тăкнă тата противникăн пехотине пĕр батальона çити вĕлерсе пĕтернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

Санитаркăсем О. П. Поливко тата М. К. Якименко юлташсем паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнă. Вĕсем аманнă 90 боецпа командира çапăçу хирĕнчен илсе тухса малтанхи пулăшу панă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн войскăсем халăх пурăнакан пысăк пунктăн хĕррисенче çапăçнă. Çав пунктран кăнтăр-хĕвеланăçнерехри пĕр ансăр участокра нимĕçсем, пĕр полк çурă пехота тата 90 танк пухса тăратса, контратака тунă. Пирĕн боецсем тăшман пырса çапнине çирĕппĕн тӳссе ирттернĕ. Артиллеристсемпе бронебойщиксем тăшманăн танкĕсен чылай пысăк пайне вĕсем пирĕн позицисем патне пына чухнех пере-пере çĕмĕрнĕ. Темиçе сехет хушши пынă çапăçура нимĕçсен 49 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Противникăн пехоти те пысăк çухатусем тӳснĕ. Тыткăна илнисем пур.

Фронтăн çав участокĕнчех сентябрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн летчиксем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 10 самолетне персе ӳкернĕ, пĕр самолетне сиенленĕ.

* * *

Нимĕçсен 292-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 507-мĕш полкăн 7-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ унтер-офицер Генрих Шванкхауз çапла каласа панă: «Пирĕн рота вырăссемпе çапăçма пуçласанах пысăк çухатусем тӳсрĕ. Манăн отделенири салтаксем пурте вилчĕç. Эпĕ пĕр йĕркесĕр чакакан ытти салтаксемпе хутшăнса кайрăм. Вырăссен артиллерийĕпе пулемечĕсен вут-çулăмĕ пурне те пĕтерсе пычĕ. Эпир снаряд чавнă шăтăка пытантăмăр, пуçне çĕклеме хăтланакан кашни çынна пуля персе ӳкеретчĕ. Çав шăтăкра темиçе сехет выртсан, эпир тыткăна парăнсан çеç çăлăнса юлма пуррине ăнланса илтĕмĕр. Тыткăна парăнтăмăр та вара».

* * *

Н-ски чаçри боецсен пĕр ушкăнĕ Смоленск облаçĕнчи Колодези ялне йышăнсан, унта пĕр сарайра нимĕçсен фашистла пуçкасаканĕсем асаплантарса вĕлернĕ 14 красноармеецăн виллине тупнă. И. В. Федотов, С. М. Снегирьев, И. В. Федоров, В. В. Волков, И. Н. Михайлов красноармеецсен тата палласа илеймен ытти совет боецĕсен виллисем çинче çав красноармеецсене питех те тискеррĕн асаплантарнин тата мăшкăлланин йĕрĕсем пур. Гитлерла ирсĕрсем тыткăна лекнĕ красноармеецсен аллисемпе урисене мăкăлтаса пĕтернĕ, хăйсене штыксемпе чикнĕ, ӳчĕсене каса-каса илнĕ тата хырăмĕсене çурнă.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче

СТАЛИНГРАДРАН ХĔВЕЛАНĂÇНЕРЕХРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 10-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Сталинградран хĕвеланăçнерехри районра çапăçусем питĕ хаяррăн пулса пыраççĕ. Тăшман пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăрах малалла талпăнать.

Нимĕçсен чаçĕ Н-ски подразделение атакăланă. Хастарлă боецсем тăшмана хăюллăн кĕтсе илнĕ. Нимĕçсене çывăха ярса, совет пехотинецĕсем тăшмана пулеметсемпе тата винтовкăсемпе пере-пере вĕлернĕ. Танмар çапăçура пирĕн подразделени гитлеровецсен пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче 3 çĕмрĕк танк выртса юлнă. Пирĕн артиллеристсем пехотинецсене пулăшса пырса татах 2 бронемашинăна тата нимĕçсен пехоти ларса пыракан 6 грузовика персе çĕмĕрнĕ.

Тăшман пирĕн подразделение тепĕр хут атакăлама хăтланни ăнăçуллă пулман. Кĕске вăхăт пынă çапăçу хыççăн нимĕçсем каялла чакнă.

Нимĕçсем Якубович капитанăн çемьине мĕн тунă

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрĕн 11-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Якубович капитан хăйĕн Днепропетровскра пурăнакан çемьин кунçулне нумайччен пĕлмесĕр тăнă. Унăн Днепропетровскран çăлăнса тухнă юлташĕ çак кунсенче ун патне çыру янă. Çав çырура вăл капитанăн çемьине мĕн туни çинчен çырать.

Гитлеровецсем чечекленсе ларакан Днепропетровска тĕрме туса хунă. Урамсемпе площадьсенче виселицăсем тăрççĕ. Нимĕçсем совет граждăнĕсене тĕпчесе туса тăмасăрах вĕлереççĕ. Капитанăн 4 çулхи ачи—Юра ачасемпе пĕрле картишĕнче вылянă. Нимĕç автоматчикĕ Юрăн ашшĕ совет командирĕ иккенне пĕлсен, ăна персе пăрахнă. Унтан Якубовичăн тăванĕсене шырама ухтарма тытăннă. Çав кунах гитлеровецсем капитанăн ватă амăшĕ патне çĕмĕрсе кĕнĕ те ăна пистолетпа персе вĕлернĕ. Унтах капитанăн аппăшне те тискеррĕн вĕлернĕ.

Чăваш АССР прокуратуринче

Республикăри хăшпĕр колхозсенче колхоз председателĕсемпе бригадирсем тата ыттисем те 1942 çулхи тырпулсене пуçтарса кĕртнĕ вăхăтра тырпулсене чылаях тăккалаççĕ, çапла туса вĕсем ялхуçалăх ĕçĕсенче тăкаксем тумалла марри çинчен калакан законсене пăсаççĕ.

Тырăсене пуçтарса кĕртнĕ тата авăн çапнă çĕрте тăкаксемпе кĕрешес ыйту çине çиелтен пăхса совет законĕсене пăснăшăн Чăваш АССР прокуратури суда парса, Улатăр районĕнчи «Победа» колхоз бригадирне Шарина 10 çуллăха, колхоз бригадирне Нумкова (Кувакино районĕ) 5 çуллăха, Сĕнтĕр МТС комбайнерне Кузнецова 5 çуллăха, «Заветы Ильича» колхоз председательне Еремкина 5 çуллăха хупса усрамалла тунă.

Кунсăр пуçне, уборкăра государство заданийĕсене пурнăçлас ĕçсем çине ответсăррăн тата преступлениллĕ пăхнăшăн, республикăри прокуратура Сĕнтĕрвăрри МТС директорне Ельмакова, çав МТС-ăн старши механикне Васильева тата трактор бригадин бригадирне Ермолаева суда панă.

Ют çĕршывсенче

Америка журналĕ Европăна халех çĕмĕрсе кĕме кирли çинчен

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). «Либерти» журнал çакăн пек статья пичетлесе кăларнă: çав статьяра Германи çине сывлăшран хаяррăн бомбăсем пăрахнипе çеç вăрçăра çĕнтерме пулать тесе шутлакансем çинчен кулса çырнă. Статьяра çапла каланă: çĕнтерес тесессĕн, тип çĕр, тинĕс-çар тата сывлăш çар вăйĕсен пĕрле сыхăнса Франципе Бельгие çĕмĕрсе кĕмелле, тенĕ.

Пĕрлешнĕ çĕршывсем 1942 çулта Европăна çĕмĕрсе кĕрес теççĕ пулсассăн, çак ĕçе сентябрь уйăхĕнче тумалла,— тесе палăртать статья.

Сасартăках анлăн çĕмĕрсе кĕме сук, çавăнпа та противника сыхлантарса ӳкермелле. Пĕр вăхăтрах темиçе пунктран пырса кĕмелле, противника ăнтан ямалла, хăш тĕлте чи вăйлăн пырса çапассине вăл ан пĕлтĕр.

„Ĕçлев кунĕ“ ячĕпе Нью-Йоркра пулса иртнĕ митинг

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 10-мĕш. (ТАСС). США-ра çулсерен сентябрĕн 7-мĕшĕнче иртерекен «Ĕçлев кунĕ» ячĕпе Нью-Йоркра питĕ пысăк митинг пулса иртнĕ. Унта 100 пин çынна яхăн пулнă. Митингра пулнисем студентсен пĕтĕм тĕнчери съездне пынă совет делегачĕсене тăвăллă оваци туса саламланă.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Совет Союзĕн, Англин, Китайăн тата Кĕрешекен Францин хĕçпăшаллă вăйĕсен представителĕсене значоксем панă.

Студентсен пĕтĕм тĕнчери Вашингтонра пулнă съездне пынă совет делегацийĕн членне, Совет Союзĕн чаплă снайперне Людмила Павличенкăна, значок парса, Нью-Йоркри производствăллă профсоюзсен Конгресĕн профсоюз центрĕн секретарĕ Миллс çапла каланă: «Гитлерпа унăн фашистла кĕтĕвĕсене сывăх вăхăтрах хăватлă çулăмпа çунса тăракан икĕ боевой лини хушшине хĕссе хурассишĕн эпир хĕрӳллĕ шухăш-кăмăлпа пурăнатпăр», тенĕ.

Нью-Йорк хулин мэрĕ Ла-Гардиа хăйĕн сăмахĕнче çакна палăртнă: «Павличенко аслă халăхăн паттăрла çарĕн символĕ кăна мар, вăл çав вăхăтрах хӳтлĕхсĕр хĕрарăмсемпе айăпсăр ачасене массăллăн вĕлернине хирĕç протестлекен пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен символĕ те пулса тăрать», тенĕ.

Англи хаçачĕсем Черчилль сăмахĕ çинчен мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Англи хаçачĕсем пурте Черчилль общинăсен палатинче вăрçă лару-тăрăвĕ çинчен тухса калани çинчен çыраççĕ.

«Таймс» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: «Çавăн пек паха ĕçре союзниксен стратегийĕ пĕрлĕхлĕ пулни çеç вăхăтпа вырăна тĕрĕс суйласа илме май парать; союзниксенчен пĕри вилĕмле çапăçнă чухне ыттисем хатĕрленкелесе çеç тăрсассăн, çавăн пек пĕрлĕхе тума питех те йывăр пулать. Англишĕн çав вăхăт вăрçă пуçланнăранпа тăватă çула тăсăлни, çакă ăнăçусăрлăхсем пирки пулнă пулин те, пирĕншĕн хамăршăн та, пирĕн союзниксемшĕн те намăс япала пулса тăрать. Пĕтĕм наци, граждăнла пĕтĕм халăх тата çар çав намăса çуса тасатасшăн. Çав тапхăртан тухсассăн çеç эпир союзниксен пĕрлешӳллĕ стратегин лайăх шухăшласа тунă планĕ пуласса кĕтме пултаратпăр; çав план вара Англипе Пĕрлешӳллĕ Штатсем Германипе вăрçни (пуринчен ытла тинĕс çинче вăрçни) Российăна типçĕр çинче çапăçма пăртак пулăшса тăнă тапхăра вĕçлеме тата пĕрлĕхлĕ вăрçă тапхăрне, икĕ фронтпа е унтан ытларах та фронтпа пулса пырас вăрçă тапхăрне пуçласа ярĕ; çав вăрçăран Гитлер питĕ хытă хăрать, унтан вăл питĕ нумайччен хăтăлса юлма пултарчĕ-ха».

«Дейли уоркер» хаçат çапла çырать: Черчилль Англия вăрçăра, ытларах та тинĕс çинче, питех те пысăк йывăрлăхсене çĕнтерсе пырать тесе калани тĕрĕс сăмах. «Анчах та кам та пулсан эпир халиччен туни е халь тăваканни çителĕклĕ тесе калама пултарать-и? Эпир хамăртан мĕн килнине пурне те тусассăн çеç лăпланма пултаратпăр. Эпир ытларах тума пултарайман тесе, иккĕмĕш фронта маларах уçмашкăн пирĕн наци питĕ пысăк вăй тума пултарайман тесе кам калама пултарать? 1942 çулта Европăра иккĕмĕш фронт уçас тĕлĕшпе халех тумалли задачăсем пирки Англия, США тата СССР килĕшсе татăлни 4 уйăх çитрĕ, Сталинград патĕнче хальхи вăхăтра Хĕрлĕ Çар пирĕн пĕрлехи ĕçшĕн татăклă пулса тăракан çапăçăва халиччен курман тимлĕхпе туса пырать. Пиртен ĕç çеç ыйтаççĕ. Пĕтĕм çĕршыв çакна туйса тăрать. Пĕтĕм çĕршыв тăшманпа тытăçса илме, çапăçăва хăйĕн мĕнпур вăйне хума çунса тăрать».

Англири тред-юнионсен конференцийĕнче

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: тред-юнионсен Блэкпудри конференцийĕн заседанийĕнче генсовет членĕ Джордж Гибсон резолюци тăратнă:

«Совет Российине питĕ вăйлă пулăшас тата тăшмана çапса аркатмалли татăклă вăрçă ĕçĕсене хăвăртлатас тĕкенсемпе пĕр шухăшлă пулса, конгресс Англири профессиллĕ союзсен движенийĕ ячĕпе компетентлă влаçсене, вĕсем Европăра наступлениллĕ ĕçсем тума вăхăт çитрĕ тесе шутласанах, пур енчен те пулăшма сăмах парать».

Çав резолюцие сĕнсе, Джордж Гибсон çапла каланă: «Иккĕмĕш фронта ыранах уçсан генсовет хаваслăнĕччĕ, анчах та иккĕмĕш фронта ăна тротуар çинче пурăпа çырса уçма çук», тенĕ. Гибсон сывлăшра пуç пулса тăма кирлине тата войскăсене куçарма транспорт кирлине кăтартса панă. «Эпĕ премьер-министрăн наступлени тăвас кăмăл çителĕклĕ тесе шутлатăп»,—тенĕ.

Машиностроительсен пĕрлешнĕ союзĕн председателĕ Джек Теннер çав резолюцие çакăн пек каласа тӳрлетме сĕннĕ: хальхи вăрçă лару-тăрăвĕ иккĕмĕш фронта халех уçма хушать, теме сĕннĕ. Çавăн пек сĕннине хӳтĕлесе, Теннер çапла каланă: манăн шухăшпа, рабочи класс çине тăшманла пăхакан тата Россия çине сиввĕн пăхакан вăйлă группа пур-ха, вăл—асторсем тата «импери политикин группи» текенскер, тенĕ. Резолюцире кăтартнă «компетентлă влаçсем» 1940 çулхи май уйăхĕнче пулнă шухăш-кăмăлсемпех пурăнаççĕ-ха, тесе шутлать Теннер.

Гибсон тăратнă резолюцие конференци йышăннă. Теннер сĕнниине йышăнман, çав тӳрлетӳшĕн 3.584 пин сасă, ăна хирĕç 1.526 пин сасă панă (Конференцире панă сасăсене кашни делегата янă тред-юнион членĕсен хисепĕ тăрăх шутлаççĕ).

Германи салтакĕсем фронта каясшăн мар

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Ля сантинелль» хаçат çапла çырать: Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтра аманнă хыççăн Хĕвеланăç Европăра сывалакан нимĕç салтакĕсем тепĕр хут Российăна каясшăн мар. Фронта час тавăрăнатăр-и? тесе ыйтсан, салтаксем çапла калаççĕ: «Эпĕ хамăн пурнăçа луччĕ тĕрмере пурăнса ирттеретĕп», «мана Российăна каялла ярсан, эпĕ унтан таратăп», «мана луччĕ тӳрех вĕлерччĕр», теççĕ. Хаçат Голландири пĕр аэродрома хуралласа тăнă Германи салтакĕсене, хĕвелтухăçне яраканскерсене, Голландири фашистсемпе улăштарнă вăхăтра пулнă хирĕçӳ çинчен çырать. Германи салтакĕсем — пире «сутăнчăксен айăпĕпе» фронта яраççĕ, тесе кăшкăрнă. Çурçĕр Францире тăнă нимĕç салтакĕсем хĕвелтухăçне кайма хушакан приказ илсен, вĕсенчен нумайĕшĕ, çапăçусенче писнĕ çынсем пулнă пулин те, макăрнă.

УИЛКИ ТУРЦИН ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔПЕ САРАДЖОГЛУПА КАЛАÇНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: сентябрĕн 9-мĕшĕнче Уилки Анкарара Турцин премьер-министрĕпе Сараджоглупа пĕр сехет хушши калаçнă.

АНГЛИ БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ДЮССЕЛЬДОРФА ВАЙЛĂН ТАПАННĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен хăватлă соединенийĕсем Дюссельдорфа тата Хĕвеланăç Германири ытти объектсене вăйлăн тапаннă.

Англи авиацийĕн самолечĕсем оккупациленĕ территори çинче наступлениллĕ операцисем туса ирттернĕ.

Çĕрлехи операцисенчен хăйсен базисене 31 бомбардировщик тавăрăнман.

МАДАКАСКАРТА ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕНЕ ÇĔНĔРЕН ПУÇЛАСА ЯНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 11-мĕш. (ТАСС). Лондонра правительство çакăн пек заявлени пичетлесе кăларнă:

Диего Суареса оккупациленĕ хыççăн Англи правительстви Мадакаскарăн генерал-губернаторĕ тĕнĕл держависене çав утраври базăсемпе усă курма е çав утравпа ытти майсемпе усă курма парас мар тесе тумалли ĕçсене пурнăçлама Британи командованине май парĕ тесе шанса тăчĕ. Анчах та Виши правительствин позицийĕ (генерал-губернатор унăн кăтартăвĕсем тăрăх ĕçлет) Англи командованийĕ ыйтнине мирлĕ майпа пурнăçлама çуккине кăтартрĕ. Çавăнпа Англи командованийĕн çав утрав çинче питех те кирлĕ вăрçă ĕçĕсем тумалла пулчĕ.

Кĕрешӳри пĕрлĕх

Вăрçă çынсен пурнăçне питĕ пысăк улшăнусем кӳчĕ. Çак вăхăтра эпир тăшмана курайми пулма, тăван çĕршыва чĕререн юратма вĕрентĕмĕр. Вăрçă... Асăнма йывăр сăмах вăл... Анчах хамăра чура тума килекен тăшмана хирĕç ăна мĕн пĕтерсе тăкиччченех вăрçас пулать. Чĕрене хаяр курайманлăх, тавăру çулăмĕ нимĕнле те кĕрсе шăнăçаймаççĕ. Вĕсем тинĕсрен те аслă. Çамрăк пике-хĕр-и, çаврăнуллă инке-и, мучипе кинемей-и, — пурте çынвĕлерен Гитлерăн ятне ылханса асăнаççĕ.

Савнă кĕрĕ — хăйĕн каччинчен, çамрăк инке — савнă мăшăрĕнчен, ашшĕпе амăшĕ — савнă ывăлĕнчен фронтран килекен çырусене çун пек кĕтеççĕ. Пĕлес килет вĕсен тăванĕсем çинчен. Пĕлес килет вĕсен ырă хыпар-хăнар.

Пĕррехинче манăн Асламасра пулма тӳрĕ килчĕ. Çав вăхăтра письмоносец тырă вырнă çĕре, уя, хаçатсемпе çырусем илсе тухрĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, письмоносец йĕри-тавра çынсем пухăнса тăчĕç. Анчах çыру пурне те валлиех çук-çке. Вăхăт çук пирки вĕсен тăванĕсем çырайман та пулĕ. Пĕр инке малтан çыруне ăшра вуласа тухрĕ те, кайран сасăпах вулама пуçларĕ.

«Халь çеç пире приказ вуласа пачĕç: тул çутăлсан — вăрçа кĕмелле. Халь çĕрле. Инçетре çăлтăрсем йăлкăшаççĕ. Нимĕн сас-чӳ те çук. Аслати пек кĕрлекен артиллери шăпланчĕ, манăн кӳршĕ кĕске вăхăтлăха ыйăха путрĕ, связист темĕн пăшăлтатса калаçать...

Уйрăмах шухăшпа яракан темĕнле шăплăхлă самантсем пулаççĕ,—ун пек самантсене ĕмĕрне те манма çук! Кĕçĕрхи çĕре хăçан та пулсан аса илĕп эп. Аса илĕп эп Дон çеçенхирĕ çийĕнче уйăх епле ишсе çӳренине. Аса илĕп эп çăлтăрсем епле чĕлтĕртатса тăнине. Аса илĕп эп хам юлташăма. Шутласа выртатăп. Пурнăçпа вилĕм çинчен шутлатăп. Шутлатăп сире çăлса хăварасси çинчен. Тул çутăлать. Çапăçăва каймалла»...

Çырăва ик-виç тĕслĕ карандашпа çырнă, хăшпĕр вырăнĕсем вараланса пĕтме пуçланă. Патвар инке, чĕрипе хăйĕн савнă мăшăрĕшĕн çунаканскер, мĕншĕн ун пек пулнине лайăх ăнланса илчĕ. Çырăва пĕр сехет хушшинче ларса çырман, пушă вăхăтсем тупса темиçе кун хушшинче çырнă.

Вăрçă тылпа фронт хушшинче çирĕп пĕрлĕх суратрĕ. Вăл пĕрлĕхе нимĕнле усал тăшман та пăсайрас çук. Кĕрешӳри пĕрлĕх вăйлансах пырать. Фронтрисем çĕнтерӳшĕн ĕçлеме сунаççĕ, тылран тăшмана пĕтерме хушса çыраççĕ.

Нумаях пулмасть «За коммунизм» колхоз председателĕ пулнă. Исаак Никитин тăван колхозĕнчи колхозниксем патне фронтран вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçлеме ыйтса çырнăччĕ. Ун патне колхозниксем кăмăллă ответ пачĕç. Вĕсем тырпулсене районра чи малтан вырса пуçтарнă. Оборона фондне 15 центнер тырă панă, государствăна кăçалхи çулшăн тырă, çăмарта, çăм парса татнă. Аш-какай обязательствине 100 проценчĕпех пурнăçласа, çитес çулшăн 39 килограмм панă. Боецсем валли ăшă япаласем нумай пухнă, танксен колоннине тата самолетсен эскадрильине тума укçа-тенкĕ пухнă.

Вĕсем те тылра тăшмана çапаççĕ!

Отечественнăй аслă вăрçă фронтĕнче хăйсен пурнăçĕсене хĕрхенмесĕр çапăçакан хăюллă земляксем: А. Никифоров (Шарбашран), П. Кудрявцев (Тури Ачакран), Н. Макаров (Çĕнӳшкĕнчен), Н. Феофанов (Хучашран), М. Муськов (Вăрманкасран), С. Палкин (Асламасран), И. Тихонов (Çĕнĕ Тиньгешрен) т. ыт. те тăван колхозĕсенчи колхозниксемпе çирĕп çыхăну тытса тăраççĕ. Мухтавлă гвардеецсене колхозниксем кăмăллăн асăнаççĕ.

Вăрçă вучĕ витĕр тухса, чăваш ывăлĕ-хĕрĕсем тăшмана çĕнтерме вĕренсе çитрĕç. Арăслан пек çапăçса, вĕсем правительство орденĕсемпе медалĕсене илме тивĕçлĕ пулчĕç. Акă мĕн çырать Николаевскинчи Сталин ячĕпе тăракан колхозран Хĕрлĕ Çар ретне кайнă Иван Крылов: «...Пирĕн гвардеецсем çапăçусенче чапа тухрĕç... Мана правительство «За боевые заслуги» медаль парса наградăларĕ. Эпĕ кĕрешӳре татах та çитĕнӳсем тăвăп. Хама телейлĕ те лăпкă пурнăçпа ӳстернĕ тăван çĕршывшăн, хамăрăн ирĕклĕхшĕн кирек хăш вăхăтра та пуçа шеллемесĕр çапăçма хатĕр».

Советски районран икĕ летчик Федот Орловпа Борис Васильев, камăрăн аслă тăван çĕршывшăн, унăн ирĕклĕхĕпе чыслăхĕшĕн, тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçса, Совет Союз Геройĕн ячĕсене илме тивĕçлĕ пулчĕç. Районри ĕççынисем хăйсен паттăр ывăлĕсемпе тивĕçлипех мухтанаççĕ.

Совет Союзĕн Геройĕсем Ф. Орловпа Б. Васильев юлташсем районри организацисемпе, хăйсен тăван ялĕсенчи колхозниксемпе çыхăну тытсах тăраççĕ.

Нумаях пулмасть Ф. Орлов юлташ хăйĕн çапăçури ĕçĕсем çинчен çырса пĕлтерчĕ. Вăл 133 хутчен боевой вĕçевре пулнă, ирсĕр тăшманăн пуçĕ çине пиншер килограмм вилĕм металĕ тăкнă. Тăшманăнне сывлăшри çапăçусенче, аэродромсем çинче 100 ытла самолет пĕтернĕ. Нимĕçсен танксем, боеприпассемпе ытти çар хатĕрĕсем тиенĕ темиçе эшелонне çапа-çапа аркатнă. Фрицсемпе танксене темиçе çĕршер çынна леш тĕнчене ăсатнă.

Геройсен ĕçĕсемпе хавхаланса, районри колхозниксемпе колхозницăсем фронта татах та вăйлăнрах пулăшассишĕн тăрăшаççĕ.

Аслă кĕрешӳре çĕнĕ паттăрсем çуралаççĕ. Сталинла сокол Никифор Игнатьев, Хурамалăх ялĕнче çуралса ӳснĕскер, фронтра нимĕç захватчикĕсене хирĕç хăюллăн кĕрешсе, боевой орден илме тивĕçлĕ пулнă.

Çапла фронтри паттăрсем хăйсен çапăçури ĕçĕсем çинчен хыпарсем пĕлтерсе тăраççĕ, колхозниксемпе колхозницăсем вĕсене тылри хĕрӳллĕ ĕçпе ответлеççĕ.

Фронтовик! Сана тылри тăванусем манмаççĕ. Тискер тăшмана çапса аркатăпăр. Урамра боец утнине курсан: «Акă фронтовик килет. Мухтав ăна!» тесе алă тытăпăр. Эпир фронтовиксене чĕререн юрататпăр. Çĕнĕ çул ячĕпе, май уявĕнче, тата ытти чухне вĕсем патне нумай парнесем ярса патăмăр. Киле таврăнсан, фронтовик пире: «Тавтапуç! Эсир маншăн тăрăшрăр!» — тесе калĕ. Эпир те ăна пирĕн ирĕклĕ пурнăçпа чыслăха паттăррăн хӳтĕленĕшĕн пĕтĕм халăхпа тав тăвăпăр.

ЯКОВ СИГАЕВ.

СОВЕТСКИ РАЙОН.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1370

Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.